Шупашкар - 2004



**Иван ЕГОРОВ**

# Хурал пӳрчӗ

Сăвăсем

Шупашкар - 2004

УДК 821.512. 111
ББК 84 (2 Рос-Чув) - 4
Е 30

**Иван ЕГОРОВ**

**ХУРАЛ ПӲРЧӖ.** Сӑвӑсем. - Шупашкар, 2004.
- 112 стр.

Иван Егоров - ватӑ прозаик, ҫамрӑк поэт. Вӑл сӑвӑ ҫырма хальтерех ҫеҫ пуҫларӗ-ха, унччен калавсемпе повеҫсем, романсем кӑна ҫырнӑ. Анчах та сумлӑ прозаикӑн поэзи еннелле туртӑнас туйӑмӗ ҫав хайлавсенче хытах палӑрнӑччӗ ӗнтӗ, унӑн пейзажӗсем, лирикӑлла шухӑша кайнисем малтанхи вӑхӑтсенчех чуна ҫатӑрласа илетчӗҫ, унта кӗрсе вырнаҫса яланлӑха асра юлатчӗҫ.

Халӗ ҫавсем сӑвӑ йӗркисем пулса шӑранма пуҫларӗҫ...

Ум сӑмахне ҫыраканӗ М.Сениэль.

© И.Егоров, 2004
© М.Сениэль, 2004

# *Çамрăк поэт*

Иван Егоров сăвă çырма хальтерех çеç пуçларĕха. Унччен вăл калавсемпе повеçсем, романсем кăна çырнă. Анчах та сумлă прозаикăн поэзи еннелле туртăнас туйăмĕ çав хайлавсенче хытах палăрнăччĕ ĕнтĕ, унăн пейзажĕсем, лирикăлла шухăша кайнисем малтанхи вăхăтсенчех чуна çатăрласа илетчĕç, унта кĕрсе вырнаçса яланлăха асра юлатчĕç.

Халь Иван, çулсем иртнĕ май, паллах ĕнтĕ пурнăçри тĕрĕсмарлăхсене, нушапа терте, хуйхăпа суйха ытларах асăрхать, çавсене «тăрă шыв çине кăларма» хăтланать. Вăл сăввисене çула май тенĕ пек хайлать пулин те хăш чухне самаях аван хайлать - ĕнерӳллĕ, çĕнĕлле, сăтăрăнса пĕтмен сăмахсемпе çырма тăрăшать.

«Поэт прози» текен ăнлав тахçанах пур, «прозаик поэзийĕ» тени вара питех илтĕнмест. Паян эпир вулакана прозаикăн «Хурал пӳрчĕ» ятлă сăвă кĕнекипе паллаштаратпăр - ырă çул сунар Иван Егорова çав çĕнĕ ĕçре, çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнӳ тумалла пултăр!

Иван Павлович Егоров 1943 çулхи майăн 9-мĕшĕнче Тутарстанри Аксу районне кĕрекен Саврăшпуç ятлă ялта хресчен çемйинче çуралнă. Вăл вăхăтра çĕршыва Гитлер хурахĕсем тытса илесшĕн тапаçланнă, тĕнчипех хаяр вăрçă кĕрленĕ. Вăрçă иртсен те халăх пурнăçĕ калама çук йывăр пулнă. Ялĕнчи улăм витнĕ лапчăк пӳртсенче çутă та, радио та, çăкăр та, тум-юм та курăнман. Иван вĕренме çирĕм пилĕк çухрăмри Аксăва çӳренĕ, вуннă пĕтер-

сен Чистайри ремесла училищине рулевоя вĕренме кайса кĕнĕ, кайран Чулман Атăлпа Аслă Атăл тăрăх виçĕ çул теплоходпа ишнĕ, унтан çарта виçĕ çул ытла хĕсметре тăнă, килне кĕçĕн лейтенант пулса таврăннă. Çартан таврăнсан вăл Аксури район хаçатĕнче тăлмачра ĕçленĕ, вара Хусан университетне вĕренме кĕнĕ.

Иван Егоров «Лайăх ача» (1976), «Виçĕ чарлан» (1977), «Инçет кăваклăхĕ» (1980), «Ашшăпе ывăлĕ» (1984), «Шур перчетке» (1989), «Куç çути» (1992) тата «Усал хыпар» (2003) ятлă кĕнекесен авторĕ. Вăлах «Тĕтреллĕ Лондон», «Çут тĕнче» романсем те çырнă. «Çут тĕнче» - роман-эпопея, хăй виçĕ кĕнекерен тăрать.

Новеллăсемпе калавсем çырас ĕçе алла илнĕ хыççăн писатель повеçсем çырас енĕпе те ăсталанса çитнĕ, вара романсем хайлама хал çитернĕ. Унăн «Революци салтакĕ», «Виçĕ чарлан», «Хуралçă», «Хĕрĕх виççĕмĕшсем», «Шур перчетке», «Куç çути», «Салтак нуши», «Эккей, Патмантей...» повеçĕсемпе вулакан паллашнă ĕнтĕ, вĕсем пурте пичетре кун çути курнă. Халь... сăввисем туха пуçларĕç. Унчченех-ха, сăввисене çырма пуçличчен, пулас поэт хăйĕн «Çут тĕнче» романĕнчи пĕр вырăнта çапла калать: «Поэт пулсан, вăл çакна, темле, сăмахпа каласа парайми шухăш-туйăмпа тулса ăшне пăштаракан çак япалана, сăвă йĕркисемпе ăнлантарнă пулĕччĕ те - ун пек ăсталăх çукпа пĕрех Иванăн. Çукпа пĕрех... çапах та пур, апла пулсан...», - тет. Иккен, прозаик ун чухнех туйнă хăй поэт иккенне. Хăй çинчен хăй «çукпа пĕрех» тени ĕнтĕ вăл - сăпайлăх палли, «эп - гений» тесе кăкăр çапса çӳре-

кен анрасене кăштах тĕксе илни. Ун пеккисен шучĕ юлашки вăхăтра ӳссех пырать пулас...

«Хурал пӳрчĕ» кĕнекене автор атте-анне, савни, тăван чăваш халăхĕ, çамрăклăхпа ватлăх, пурнăçпа вилĕм пирки калакан, тăван тавралăхпа çутçанталăк илемне мухтакан хайлавĕсене кĕртнĕ. Унта çак сăвăсемпе пĕрлех хурал сăввисем те чылай. «Мĕншĕн апла?» - тесе ыйтма пултарать вулакан. Мĕншĕн тесен Иван Егоров нумай сăввине хурал пӳртĕнче, каç-каçĕпе те çĕр хута «пуянсен объектне» хуралланă чух çырнă. Ĕçлесе илнĕ укçине кĕнеке кăларма пухса пырать, пенси укçине вара «çемье бюджетне» хывать. Çакăн пек тума вăл килтисемпе калаçса татăлнă.

Хальхи тертлĕ-хурлă пурнăçра чăн-чăн писателе кĕнеке кăларма урăхла нимле май та çук. Чăваш кĕнеке издательстви ĕлĕк те Иван Егорова ытлашши питех ыр сунман та, халĕ пушшех кăйттăланса, иртĕхсе кайрĕ. Мĕншĕн тесен чаракан çук, мĕн хăтлансан та юрать. «Тĕтреллĕ Лондон» роман çав кантурта пичетлессе кĕтсе вунă çул черетре тăчĕ, юлашкинчен акă мĕнле çыру ярса парса «савăнтарчĕç» авторне: «Хисеплĕ Иван Павлович! - тенĕ унта кăшкăру палли лартсах. - Сирĕн роман алçырăвĕ илемлĕ литература редакцине килнĕренпе самаях вăхăт иртрĕ, анчах та эпир сире нимĕнпе те савăнтарма пултараймастпăр. Укçа-тенкĕ çитменнипе, хăвăрах куратăр, кĕнеке кăларас ĕçри лару-тăру йывăрлансах пырать. Çак лару-тăрура хăшпĕр писательсем хăйсен кĕнекисене спонсорсем пулăшнипе кăларма тытăнчĕç, - тет малалла издательствăн тĕп редакторĕ П.Димитриев (Эйзин). - Сирĕн алçырăвне илес пулсан, эпир ăна хăçан пичетлесе кăларас-

си шантарса пирки калама пултараймастпăр, çавăнпа та пĕр хусканусăр вырттариччен каялла илсе каймасĕнетпĕр...»

Вăт çапла! Хăйсен вара, директорĕн те, тĕп редакторĕн те, савнийĕсемпе тусĕсен, тăван-пĕтенĕн ниме тăман кĕнекисем тухсах тăраççĕ çак патшалăх издательствинче. Ĕлĕк те çаплаччĕ, халĕ те çапла... Хăйне ун чух та, халь те хĕсĕрленĕ пирки-тĕр, пĕр сăввинче Иван çапла калать: «Вĕлермерĕç. Те хĕрхенчĕç?» - тет. Хĕрхенсе мар пуль-ха, аллисем çитеймерĕç пуль? Хĕрхенессе те шеллессе кĕтсе лармалли çук пирĕн ун пек этемсенчен, хĕрĕх çул хушши пĕртте хĕрхенмерĕç, шеллемерĕç, ялан таптарĕç пулсан, халь тин, самана пушшех тискерленнĕ тапхăрта, вăл япалана кĕтсе илеймĕпĕр.

Хамăр маларах каланă сăмах патне таврăнса, çамрăк чух поэт пулса ĕлкĕреймен «генисене» мĕн сунас килет-ха? Каçхи хурала кĕрĕр. Çĕрĕ-çĕрĕпе «объект» хуралла-хуралла ир енне поэт пулатăрах - хурал пӳртне кайнă чух хутпа кăранташ илме çеç ан манăр. Лиска йытă ан ертĕр, вăл çурăк сассипе сăвă çырма кансĕрлет...

**Михаил СЕНИЭЛЬ.**

* * *

Лайăх сăвă шăратма
лайăх çын пулас пулать.
Лайăх сăвва ăнланма
лайăх çын пулас пулать.

Япăх сăвă юхтарма
япăх çын пулас пулать.
Япăх сăвва мухтама
япăх çын пулас пулать.

Лайăх сăвва хурлама
япăх çын пулас пулать.
Лайăх сăвва ырлама
лайăх çын пулас пулать...

# *Пурнап...*

Пӳрт умĕнчи улма йывăç
хĕвел енне тайăлать.
Сисмесĕрех - ирĕн-каçăн
унта пăхсах ватăлап.

Тухăç хĕрлĕ, тухăç хĕрлĕ,
анăçĕ те - çав тĕсех.
Тĕнче нуши темĕн тĕрлĕ.
Пурнап вилессе пĕлсех.

* * *

Атте пирĕн - лере.
Эпĕ - ку тĕнчере.
Нумай пулать ăна курманни.
Тĕл пулаймăп ăна -
хурланса асăнап.
Ĕмĕрне те иртмест хурланни.
Пырăп лере - атте, паллăн-и?

* * *

Тавай тарăн шыва чăмар-и,
сывлăшпа çаврăнса тухар-и.
Кĕскеех те ĕмĕре, вăрăм кунсене
ырлăхпа ирттерсе ярар-и.

Куртăр-и,
çамрăк ĕмĕр иртсе кайрĕ?
Сисрĕр-и?

Тарăн шыва эпĕ чăмрăм та
тухрăм сывлăшпала çаврăнса.
Кĕскеех те ĕмĕре, шутлă кунсене
хурлăхпа ирттереп пурăнса.

Куртăр-и,
пĕтĕм ĕмĕр иртсе кайрĕ?
Сисрĕр-и?

# *Утрăм...*

Утрăм кăна утрăм,
ӳкрĕм такăнса.
Тăма кăна тăтăм,
кайрăм йăвансах.

Йăваннă çĕртен эп
пăхрăм каялла:
выртас мар ку халлĕн,
утас малалла!

Тăвалла утас теп -
халăм пĕтрĕ, мур.
Аната анас-тăр
вилсе выртас пур.

Камран пĕр-пĕччен çĕ
тарса тухрăм эп?
Килтех пĕр тухмасăр
лармалла пуль теп...

## *Хурал пӳрчӗ*

Тӗттӗмре - хӑйҫути. Хурал пӳрчӗ.
Тӗттӗмре хамлатать - мӗскер пулчӗ? -
хамлатать усал йытӑ хаяррӑн.
Ҫывхарать-и такам? Чӑштӑртатрӗ-и ҫулҫӑ?
Чунҫӑм, чун, ма ҫӳҫентӗн, хӑрарӑн?

Пимен мар, летопись эп ҫырмастӑп,
пурпӗрех ун пекех хӑй ҫутатӑп.
Эп - хуралҫӑ, объект хураллатӑп,
поэт мар, пурпӗрех-ҫке ҫунатӑп -
каҫсерен шур хута хурататӑп.

Тӳпере ҫӑлтӑрсем курӑнмаҫҫӗ.
Пӳлӗмре мӗлкесем вӑранаҫҫӗ,
явӑнаҫҫӗ, шӑваҫҫӗ, ташлаҫҫӗ,
хӑйсенле пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ:
«Эс ларах, - теҫ, - ларах, шухӑшлавҫӑ».

Шухӑшлап ҫав - хвилософ эп, лирик.
Ҫӗрӗ вӑрӑм, пӗччен эп, чун ирӗк.
Тен, пӳртре музӑсем те пур пулӗ?
Ҫавна ҫеҫ картса хутӑм эп ҫирӗп:
чун пулсан вӗсемпе те пӳрт тулӗ...

# *Тĕкĕр умĕнче*

Ирпе-ирех хĕпĕртесе
тĕкĕр умне пытăм.
Çамрăках курнап-ха тесе
савăнтăм пит хытă.

Кăнтăрлапа тĕкĕр енне
сулăнса кĕрсен-тĕр,
сăн пуçларĕ тĕксĕмленме -
хама хам хĕрхентĕм.

Каçалапа тĕкĕр умне
каллех пырса тăтăм.
Кăтартнăран ват çын сăнне -
тапсах йăвантартăм.

Тĕнче вăранасса кĕтсе
чĕптĕм куç хупмарăм.
Мĕнле курăнăп-ши тесе,
çĕн тĕкĕр шырарăм.

## *Чирлĕп...*

Аптăраса ӳкрĕм те,
пит вирлĕ ятларĕç:
мĕн-ке вăхăтсăр чирлерĕн -
эмел хаклă, терĕç.

Каясах килмерĕ пулĕ,
турри те шеллерĕ -
умра курайман этемччĕ:
юриех вилмерĕм.

Тухтăр çырса панине
ĕçмерĕм пĕрне те.
Ĕçмесен вилен тесе
никам хистемерĕ.

Çитĕ «чирлемелли вăхăт»,
таса чунтан чирлĕп -
тăшманăмсем кайса пĕтсен,
йӳнелсен эмелĕ...

## *Пĕр анне кăна...*

Шут тытрăм та, акă,
вилме выртрăм:
вилсе пăхас терĕм
юрилле.
Кам пуç вĕçне ларĕ,
кам куççуль кăларĕ
ман пек этеме
шелле-шелле?

Куçа уçса пăхрăм,
куçа хĕссе хупрăм.
Ăçта ман савниçĕм,
туссем-тăвансем?
Куçа уçса пăхрăм,
тек ăна хупмарăм.
Ман пачах килмерĕ
выртассăм вилсе.

Пĕр анне кăна-мĕн
пуç вĕçĕнче ларнă -
ман чуна çăласшăн
турра тархасланă...

## *Аса илӳ*

Хусан урлă иртет салтак çулĕ.
Хулара ман пичче вĕренет,
салтака тахçанах кĕтет пулĕ,
çула май кĕмесен çиленет.

Урампа, ак, пырап вĕçтерсе эп,
чун-чĕремĕм савăнать, юрлать.
Ха! Патруль! Чарать... Инкек тӳсетĕп:
пакуна веç вăтăрса юлать.

Кĕтĕм эп пиччем патне пĕр сассăр.
Вăл ларать-мĕн фотосем пăхса.
Альбомра анне сăнне курсассăн,
сасăсăр эп ятăм макăрса.

Кама пăрĕ çӳхине пĕлсех те,
тӳрĕрен шырарăм утма çул.
Хăвăртрах киле çитес тесе-тĕр,
хырăмпа эп шурăм - шăнчĕ чун.

Пӳрте кĕтĕм шăппăн, сас тумасăр,
алăк кутĕнче тăрап пĕччен.
Тĕпелтен пĕри, ак, чĕнчĕ... сассăр.
Ку - анне. Вилсе выртать иккен.

Малти пӳртĕн алăкĕ тач! хупă.
Кĕр-кĕрлет шалта хăна-вĕрле.
Чунсăр йыш! Ӳпкев те, тарăху та -
çĕмĕрет пуçа... Анне - вилет...

## *Çӳллĕ çыранта...*

Çӳллĕ çыранта тăратăп
эп тăсса мăя,
тĕмсĕлсе инçе пăхатăп
курас пек хама - рулевоя.

Курăнмасть унта буксир е сулă.
Тытаймаççĕ халĕ стерлĕк-пулă.
Ярăнса иртмест пĕр вĕççĕр - кимĕ.
Атăла мĕн пулнă? Атăл - вилĕ.

Унчченхи курнин мана Мăн Атăл,
калăттăм ăна: «Ан вил! Ан ватăл!
Ярăнса ирт, рулевойлă кимĕ!
Пулăпăр ун чух кама та кирлĕ...»

# *Анне ялĕ*

Анне çĕрĕ-шывĕ - Таркăн ялĕ.
Кукамайсен пӳрчĕ - хĕрринчи.
Çырма пусĕнчех ĕмĕрхи çăлĕ.
Çыранра ларать хура мунчи.

Ачаран кунта эпĕ çӳрерĕм,
вăрман урлă каçрăм аннепе.
Кукамай мана чунран пиллерĕ
пысăк çын пулма - чун пилĕпе.

Халĕ, акă, Таркăна килсессĕн
асилсе ларатăп иртнине.
Хускатса чуна, ак, тухса тăчĕ
кукамай сăнарĕ куç умне...

* * *

Таркăн ялĕн пĕр урамĕ
тем пек сарлака.
Уяв пулнă вырăнта халь -
йытă-качака.

Аннесем кунта юрланă
уявра-мĕнре.
Вĕсен юррисем юлайнă
пирĕн чĕрере.

Вĕсен юррине халь эпĕ
юрласа çӳреп:
«Çамрăк ĕмĕр иртсе кайрĕ
систермесĕрех...»

## *Атте*

Хӑнаран каякан машшинра
шӑллӑм ҫумӗнче атте ларать.
Ал сӗлтесшӗн эп юлашкинчен -
уткалатӑп алӑк умӗнче.

Тӳрлеткелет хура шлепкине,
таҫталла пӑхать хӑй инҫене,
такама курас пек тинкерет.
Тен, шырать пуль хӑйне инҫетре.

Тен, хура кун ҫитессе сисет?
Хурлӑхлӑ ытла - шухӑшӗсем?
Веҫех паллӑ ӗнтӗ тахҫанах.
Сӑнӗпе - ыраттарать чуна...

## *«Чунăм вилнĕ ĕнтĕ...»*

Пуçĕ вĕçне шăллăм пырса ларсан,
атте куçĕ шывланчĕ -
капельница енне пăха-пăха
ăшĕнче такама ылханчĕ:

«Çак чун тарăхтармăш путсĕре
кам шутласа кăларнă?
Вырттăрччĕ килсе хăй ун тĕлне.
Ухмахла вăл хăтланнă».

Куçĕсем чĕррĕн пăхаççĕ аттен,
тăнĕ те ун çухалман.
Чурăс чунлă тухтăр çумра çук,
пăшăлтатрĕ шăллăма:

«Ульăм, ĕнтĕ вилнĕ чунăм ман,
пурăнасси илĕртмест.
Эп каятăп, эсĕ сывă юл кунта,
пиччӳсене кала, пĕлтер эс...»

# *Ӳкĕнĕç*

Ял çумĕнчи çӳллĕ çĕре
çитрĕм ирпелен.
Пытарма ĕлкĕреймерĕм.
Атте, ан çилен.

Тĕнчере тĕлсĕр çӳрерĕм -
ялăма манса.
Килĕме эп килеймерĕм
хĕсметрен тарса.

Аттем пит курасшăн пулнă,
терĕç, сӳннĕ чух.
Мĕскер каласшăн вăл çуннă -
итлеймерĕм, çук.

Леш тĕнчепе ку тĕнченĕн
инçе пуль хушши.
Аттен тăпри курнать сиввĕн.
Ма вăл ун пек-ши?

Атте мĕн каласшăн пулнă?
Халь мĕнле пĕлес?
Хушшăмăрсем çĕрпе тулнă -
нимĕн илтĕнмест...

# *Шурă лĕпĕш*

Пăлтăрта пăрăлтатать пĕр лĕпĕш,
унта пырса кунта çапăнать.
Атте чунĕ пулса вăл килмен-ши?
Халь мунча кĕресшĕн çаврăнать.

«Астăвăр, ан тивĕр, вĕри шыв ан сапăр, -
калать ун пек чух анне пире. -
Сапăр тăвăр, нихăçан ан манăр,
килĕп-ха эп те çапла пĕрре».

Шухăшлăн ларатăп лапка çинче эпĕ.
Аттемĕрçĕм пирĕн çумра çук.
Чӳрече çинче ун чунĕ çатăлтатрĕ -
черетпеле ăшши панă чух.

Килте хăна кăна халĕ эпĕ.
Мĕн каласа ютра вилĕп-ши?
Аттепеле пĕрле мунча кĕме
мĕнле лĕпĕш пулса килĕп-ши?

# *Тĕлĕк*

Вăрçăра штрафбат салтакĕ пулнă,
пулемечĕ те ун вĕр-çĕнех.
Аттене йăх-ях çын вилĕм суннă,
хупса хунă тĕрмене вăрçăчченех.

Аттене эп тĕлĕкре курсассăн,
çумне лартрĕ те калать саспа:
«Тăшману нумай, питех урсассăн -
çулса тăк ăна эс çакăнпа...»

Сахал мар-ха, пур-ха, пур, чăнах та.
Ютри мар, кунти хам туссемех.
Кускалаççĕ, йӳçĕхеç, урнах-тăр,
пĕтессе пĕтеç-ха хăйсемех.

Илме хатĕр пулемет та эпĕ,
кирлĕ пулмĕ-и унта хăвна элле?
Тус-тăшман чупсан та тĕпĕр-тепĕр,
эс çапах чăтсам, ан вĕрилен.

Тӳс, ан тив. Çапса, ак, сирпĕнтерĕн -
лартас тейĕç каллех тĕрмене.
Кунти мар унти, ан çиллентер эс, -
вĕçĕмех пĕрле эсир, мĕн ĕмĕрне...

# *Сад пахчинче*

Анне пĕччен ларать пахчара.
Çумĕнче ун пушă вырăн пур.
Аттене лармашкăн мĕн чарать?
Ларĕччĕ - ямаççĕ: курчĕ хур.

Анне мĕн шухăшлă - тĕшмĕртеп,
чăрмантарас мар теп, пит шеллеп,
ыйтмасăрах чухлап, тавçăрап:
«Упраймарăмăр, - тет, - аçăра».

Атте ларас пулсан ун çумне,
пуриншĕн те пулĕ чун ăшши.
Туйнă-ши вăл аннен кун-çулне,
элле туймасăрах кайнă-ши?

# *Çумăр çитнĕ*

Тĕлĕнсе тăратăп хурал пӳртĕнче -
мĕнле пит хитре теп çĕрлехи тĕнче.
Кама-ха калас ман хам тĕлĕннине?
Калас пуль... калас пуль хурал йыттине?

Тăр-тăр! чĕтрентерчĕç пӳрт чӳречине.
Тĕппĕр-теппĕр! турĕç, чупрĕç пӳрт тавра.
Тухрăм, ак, чупсах эп çӳл пусма çине:
шалкăм çумăр çитнĕ - аптраса тăрап.

Пĕлĕтсем юхаççĕ - хура та кăвак -
хырсем çийĕн шăппăн, шăппăн-васкавар,
тĕнче пĕтсе килнĕн чуна хăратса,
тĕнчене хăйне те йăлтах хупласа.

Пăхать йыт-хуралçă темшĕн вирелле,
курасшăн вăл темĕн хапха витĕрех.
Вĕрме те тăхтать-ха - кама вĕрмелле?
Çапах та кĕтет хăй, тăрать хатĕрех.

# *Мĕн кĕтмелле?*

Çур кунĕ те хăвăрт иртсе кайрĕ,
çу та ăнăçмарĕ темелле:
тӳперен сив çумăр хытă тăкрĕ.
Малашне мĕн ырри кĕтмелле?

Çанталăкĕ кăçал пит лăскарĕ,
усалпа ермешнĕ пулмалла?
Саманине кура тавăрать-тĕр,
ăçталла тарса хăтăлмалла?

Ырри килмĕ, ырри пулас çук-тăр,
пăхах тăрар усалĕ енне.
Капланса килессе пĕр кĕтмесĕр,
пăрар, хирĕç тухса, ун майне...

# *Юхать çумăр шывĕ*

Кĕрлеттерет кăна çумăр шывĕ,
урам тăрăх юхать, пĕвенет.
Урари пушмакăм питĕ кивĕ,
каçма тăрсан витĕр йĕпенет.

Кранкки туса юлташ каçарасшăн,
атти ман пушмакран çĕнĕрех.
Юлташа эп шанма кăшт тăхтасшăн:
пуç тӳпи ун шăтăк витĕрех.

Тĕнккирех çав аслă пиччĕшĕ те,
шăллĕ шăпах унăн хăраххи:
варринерех йăтса çитерĕ те,
йывăр тесе шыва пăрахĕ...

# *Объект*

... Паçăрах шăплăхра, ав, пĕр кайăк
шăхăрать-чаклатать - кĕвĕлет:
«Ах, мана, - тет, - ан тăвăрччĕ
айăп,
тĕрĕлем-ха, - тет, - тур хушнă пек».

Эй, хĕсмет килкарти! Мĕн сехмечĕ
хăратать-ха чуна çутăллах?
Кĕрт йытти картишне килсе ерчĕ,
чупкалать унталла-кунталла.

Пуçтарать «савнисем». Кĕртлешеççĕ...
Çапăçаççĕ хастар çерçисем,
айкашса çӳп-çап çиййĕн - миçен-ши?
Чим-чим!, теççĕ; чĕррик!, теç
хăйсем.

Çитрĕм эп ĕнтĕ, акă, алла та,
хĕсĕнсе терт-нуша хушшипе.
Пуянсен «объектне» хураллатăп -
хураллатăп пуль тур хушнипе...

# *Амăшĕ*

Хăй вăл ырханкка, çара.
Куçĕ те ун пăсăк.
Туса пачĕ çич çура.
Шутлама пит кăсăк.

Савниййĕсем-каччисем,
ай, мĕнле хитре, мурсем!
Халь пĕри те çук умра -
хăть ăçта тухса шыра.

Йăва çиййĕн - ват йăмра.
Йăвара - амăш-юхха.
Ун тавра - çичĕ çура,
пĕчĕкçеççĕ çич маххa?

Ай, епле маттур вĕсем!
Йăрă та хăюллă.
Пурнăç лайăх ачисен.
Амăшĕн пит хурлă...

# *Яхта*

Яхтăна паян туса пĕтерчĕç,
туртса кайрĕç Атăл хĕррине.
Кунтисем куляннăн пăхса юлчĕç,
сӳтрĕç-яврĕç пурри-çуккине.

Акăш пек те, чарлан пек те - яхта.
Шыв çинче мĕнле курнайĕ-ши?
Шухăшларăм эп: халь аванах та,
вăрăм ĕмĕрлĕ пулайĕ-ши?

Пирĕн вăхăтра - пăрахутсемччĕ.
Рулевойччĕ эп вĕсем çинче.
Теплоход хутран-ситрен иртетчĕ.
Яхтăсем пулман çын асĕнче.

Кашни пуçлăха халь яхта кирлĕ -
модăна кĕрсе пырать пĕрмай.
Яхта çук-тăк - калаçаймăн вирлĕн,
сумĕ те пулаймĕ: эс - тулай.

Акăшăн курнать-и е чарланăн,
пурпĕр хумхатаймăп эп хума.
Манăн яхта - «Çут тĕнче» романăм.
Рулевой те, капитанĕ те хамах...

# *Хуралта*

Ментсемпе калаçса эп ларатăп.
Ав пĕри тек куласшăн манран:
«Эс мĕскер, Иван тус, виçĕ пусшăн
çак хапха тăпсине хураллан?

Кай ялна, ĕçлеме хал пур санăн,
урăх ĕç тупаймастăн пулсан.
Чăн этемĕн ятне эс яратăн:
вăрттăн пуш кĕленче пуçтаран».

Ĕнсисем ку этемĕн пит хулăн,
ахăртнех, сысналла пурăнать.
«Чечена эп тапса та тĕп турăм», -
пĕççине çĕклесе мухтанать.

«Эс асту, вăл десантник, чăнах та,-
хăлхаран пăшăлтатрĕ пĕри, -
куратни, пăх, çĕн тум ун, çĕн атă.
Пĕр тăванĕ - «крутой», Çĕрпӳри...»

Çын пирки эп усал каламастăп,
«мент» тени калаттарчĕ мана.
Чечняна укçалла тек кайсассăн,
тĕп пулса таврăнать - тăмана.

Аллинче - автомат, çийěнче -
бронъжилет.
Пуçěнче мěн пурне - ырă турă пěлет.
Çур сăмах калама та хăрарăм:
каласассăн - персе вěлерет...

* * *

Пěртен-пěр çывăх юлташăм
тăван ялта пурăнать,
кăнтăрта вилнě ачишěн
калама çук хуйхăрать.

Ачи питěрех маттурччě,
чăннипех кěреш-юман.
Контракт йěркипе вěçтерчě
Чечня еннелле - пуйма.

Çěн машина илěп терӗ,
илěп терӗ хăваттер,
сыввăн каялла килмерӗ,
сăхă пулчě çав хатер.

Ашшě сăмах хушаймарӗ -
каласшăнччě: «Мерседес»,
куççулě тумлам тухмарӗ.
Халь тин мěн тума йěрес?

# *Нимĕн те юлмарĕ*

Ялта нимĕн те юлмарĕ.
Çыннисем те пит сайра.
Килсенче çукрах юр-варĕ.
Укçа-тенки те çукрах.

Выльăх-чĕрлĕхне пусаççĕ.
Çухалаççĕ лашисем.
Урам тăрăх уткалаççĕ
килсе тулнă ют çынсем.

«Колхоза пĕтерме килнĕ», -
теççĕ вĕсене ялсем.
Кăшман уйне сутăн илнĕ
хура сăнлă яш çынсем.

Пуш-пушах ялăн урамĕ -
кайса пĕтнĕ калăма.
... Сутăнмасть уйăх-хĕвелĕ -
савăнăç та çав кăна.

# *Тутар ялĕ*

Тутар ялĕ пурччĕ,
халĕ таçта - «юк».
Пĕр чăваш пурнатчĕ,
халĕ - йĕрĕ çук.

Ун патне эп пынă
виç çулхи «пацан».
Анне кранкки тунă,
ывăнсан утса.

Утнă, ларса каннă
утса ывăнсан.
Виççĕ «вилсе выртнă»
тытса пăрахсан.

Чăваш вирлĕ вĕрнĕ
мана, ачана.
Тĕтĕрнĕ те, тĕтĕм
çитнĕ маччана.

Лăпланса лăш! пулнă
çавăн чух ача,
вилеймен, сывалнă...
Çук халь ял, мачча.

# *Кайӑк*

Садсене вут хыпнӑ.
Тӗтрере - инҫет.
Юлташ самай сыпнӑ.
Куҫ-пуҫӗ ҫиҫет.

«Ҫывӑхах пӗр кайӑк
лараканччӗ, - тет. -
Шӑкӑлчи е уйӑп.
Халь таҫта ҫӳрет.

Темшӗн вӑл пӑрахрӗ
кунта юрлама,
те тӗле ҫухатрӗ,
сивлерӗ хама?»

... Кайӑкӑн ун чун пур.
Санӑн вӑл ҫукрах.
Ҫавӑнпа килмест пуль,
ларать вӑрмантах.

# *Микул тусăм...*

Микул тусăм чăн çын - ырă чунлă.
Урампа чĕнмесĕр вăл иртмест.
Шурă çӳçĕ выртать хумлă-хумлă.
Çӳçĕ ма шуралнă - çын пĕлмест.

Йĕрет Микул тусăн чунĕ сассăр,
хура йытăран çавтер хăрать.
Кĕтмен çĕртен урамра курсассăн,
шурă юр пек тус шурса каять.

Микул тус шар курнă урăм-сурăм.
Хура тĕсрен тӳрех пăрăнать.
Хура тĕсре пур-мĕн темле ăрăм.
Кун пек чух ун чунĕ тăвăнать.

Вĕсен тĕлне тупăк кӳрсе килнĕ.
Хура мар та, пурпĕр вил сăнар:
- Кайса пăх-ха, тупăкра эп мар-и?
- Çук-çук, Микул тусăм, эсĕ мар...

# *Кут Ларивашĕ*

Эп ватăччĕ ĕнтĕ, ват çын, ăс пулмарĕ,
савни патне кайрăм хăнана.
Эрехне ĕçтерчĕ, çумне вырттармарĕ:
«Эс йӳтенĕ, - терĕ, - кирлĕ мар мана».

Кӳршĕ ял. Çил-тăвăл. Курăнмасть
вăрманĕ.
Тăман витĕр утрăм, хал пĕтрĕ шăлтах.
Тăлăх çынччĕ эпĕ, эп, Кут Ларивашĕ,
хытă тарăхрăм пуль, вилтĕм вĕт шăнсах.

Тахçантан мана, ак, савни л е р е тупрĕ,
эрехĕпех пычĕ хăнана.
Эрехне ĕçмерĕм, çума вырттармарăм:
«Юратмастăп, - терĕм, - йĕксĕк, эп
сана...»

# *Кзот Ваççи*

Кзот Ваççи халь манăн кӳршĕре
тĕлĕнмелле тĕрĕс пурăнать.
Арăмĕ те унăн пит хитре,
уйăхăн-хĕвелĕн курăнать.

Кăрнатир Ваççа - хул-çурăмпе,
пурин кăмăлне те килмелле.
Чăн-чăн пăхаттир - çӳллĕшĕпе,
йытă çаксан йытă вилмелле.

Калаçнă чух, унăн куçĕсем
пĕртте çын çине пăхасшăн мар:
кĕтесрен такам хăратнă тем,
çиçĕмле çиçеç - ахтур хаяр!

Манпала сăмах вĕçтернине
Кошшă курасран хыт шикленет.
Курчĕ-тĕк, тăшман - мĕн ĕмĕрне,
çавăнтах туслăхĕ вĕçленет.

Икĕ вут хушшине лекнĕ те,
икĕпитлĕхпе йĕрĕнтерет.
Ахальтен мар ăна арăм те:
«Чунсăр этем эс», - тет, витерет.

# *Шĕв Сăмала*

Пуçне пăрса Шĕв Сăмала
мана темĕн каласшăн:
те юрасшăн ман кăмăла,
те сăввине вуласшăн!

Сăввисенче çук чун тарĕ,
йĕркесерен - олигарх.
Çӳлте чухне хыт мухтарĕ,
халь хăртать çеç, тур çырлах.

Итлес килмест, тӳсĕм пĕтрĕ,
куçран калас - аван мар.
Турра мухтав, сасси çĕтрĕ.
Пуçларăмăр мухтама.

Кӳршĕ Ваçça, ак, куç хĕсрĕ,
хĕрелет те хушăран,
ырлать - «поэзийӳ хĕсĕр»
тес вырăнне... хал çукран...

# *Çерçи*

Турă Кайăкĕ - Хура Çерçи
пиччем çине ал çĕкленĕ.
Çыравçăсен мур кĕтӳçи -
çăхавпа тĕп тăвăп тенĕ.

Тур Кайăкĕ пулман пĕччен,
пулнă унăн эшкерĕ.
Ак пĕрскерĕ поэт çинчен
çăхав çырма хистерĕ.

Халĕ ĕнтĕ иккĕшĕ те
чеен йăл-йăл кулаççĕ,
Мишша тинех пĕтрĕ тесе
эрех ĕçсе лараççĕ.

Пĕрин юнĕ - ирçе йăхĕ,
йăлт пăсăлнă пулмалла.
Тепри... тепри - нухай пăхĕ,
тьфу! Епле шăршламалла!

Пурсуйланнă чĕрĕ виле
шухăшлама ӳркенет.

Пĕтересшĕн Сениэле -
майне-шывне пĕлеймест.

«Воробей» ирçелле ячĕ,
чăвашла вара - «Çерçи»!
Сар сăмсаллă чĕп кăначчĕ,
турĕç - халăх сăваçи...

## *Айхи*

«Айхи» тени йăлăхтарчĕ.
Мĕншĕн вăл ун пек?
Мĕншĕн суяпа çыхланчĕ?
Кам çавна пĕлет?

Паспорчĕпе вăл чăвашчĕ.
Халь - «европеид».
Чăвашахчĕ чунĕпе те.
Халь - космополит.

Чăвашла сăввийĕ унăн
хитре пĕтĕмпех.
Вырăсла çырнин çук майĕ -
сўтнĕ кĕпер пек.

Чаплă курăнас тесе-тĕр,
свита вăл ертет.
«Чаплă» свитинче килет ун
кĕтўпех еврей.

Камран ыйтмалла-ши? Калăр:
ма йĕрĕнтерет?
Теветкел калатех пулĕ.
Вăл тем те пĕлет...

# *Акивер*

«Ҫапса ҫумăр ҫăвать», - терĕ,
хӳтлĕх тупма пĕлеймерĕ,
унăн-кунăн пăхкаларĕ -
хӳтлĕх пекки тупăнмарĕ.

«Юр хĕвет», - терĕ Хĕветĕр.
Вăл мĕн тăвасса пĕлетĕр:
юрне хырма васкамарĕ,
кĕреҫине тупаймарĕ.

Ҫу кунĕ ҫитсен Хĕветĕр
«Юрату сăмсахне» кайрĕ.
Вăл ма килнине пĕлетĕр:
пăхкаларĕ-пăхкаларĕ -
савнисене тĕл пулмарĕ.

Сар Маҫака вăл юрарĕ,
эрехпе хыт хăналарĕ.
Ҫĕнĕ саманарисене
темĕншĕн юрас темерĕ -
те ĕнтĕ майне пĕлмерĕ?

Кĕркуннепе ăс та кĕчĕ:
шухăшларĕ, пăхкаларĕ,
пĕччен юлсан чупкаларĕ,
пурĕпĕр ĕлкĕреймерĕ -
шалкăм çапрĕ те антарчĕ.

Шалкăм çумăр çапса çурĕ.
Пăрлă юрĕ хӳрĕ, хӳрĕ.
Савăшу хĕлхемĕ сӳнчĕ.
Акивер кĕл тĕслĕ юлчĕ.
Шалккă пулчĕ...

## *Чапай*

Вăл вырăс тен эс, хирĕçен.
Ан хирĕç, ан тавлаш.
Чапай пач вырăс мар, ирçе,
асламăшĕ - чăваш.

Эс ху та вырăс мар, манкурт,
вырăсланма пăхан.
Ан сик, ан çараçлан, пăхкут,
мĕнпе-ши эс паха?

Хурлас теместĕп вырăса,
пур унăн тĕрлĕ çын,
анчах тăма та хăраса
ман кăмăл çук халь тин.

Аннен асламăшĕ Тарье
сар вырăс пулнă май,
сана пустармăп пуç тăрне,
пул хуть çĕр хут Чапай...

# *Дон Педро*

Дон Педро эпĕ, терĕн, хăлаçлантăн
менельникре эс, чаплă ĕçкĕре.
Пуçна ухсах, айван, мухтантăн
унчченхинчен те вĕçкĕнрех.

Эп капитан, эп подполковник, терĕн,
ик вуз пĕтернĕ - виçĕ коридор.
Вĕçсе каяс пек вирхĕнсе çӳрерĕн.
Сăмсу сан, чăн та, хĕрлĕ помидор.

Юлашкинчен вара полковник, терĕн.
Çаплах-ха ăс кĕмерĕ вĕçкĕнрен.
Вĕçсе каяс пек вĕçрĕн - çитеймерĕн
килне эс çавă ĕçкĕрен.

Сан пек полковник, сан йышши Дон
Педро
йĕри-тавра халь пинĕпе çӳрет.
Патшалăха та, халăха та сутрăр.
Ӳтпе пĕрле яту та халь çĕрет.

# *Çĕнĕ йышши телефон*

Мĕн пулнă вĕсен хăлхисене:
аллисемпе тытса пыраççĕ
пĕрре - пĕрне, тепре - тепĕрне?
Те ĕнтĕ шăнасран хăраççĕ?

Мĕн япали ку? Ăнланаймарăм.
Камран ыйтмалла-ши? Кам пĕлет?
Микул тусăмран ыйтас пуль
манăн?
Пĕлетех вăл, шельмă, чăн поэт!

Тĕлĕнчĕ Микул çав, лĕкĕрт кулчĕ,
аллине сулса пуçне те сулчĕ:
«Слушай, - терĕ, - тусăм Мегафон,
вăкăр çăмарти ул тутарла,
вырăсла вăл соткă-телефон,
кĕсре хӳри пулать - чăвашла...»

## *КПЗра, хĕсметре*

Вилес терĕм эпĕ çакăнса.
Вилеймерĕм. Татса ячĕç.
Пĕтес терĕм эпĕ çапăçса.
Хĕнемерĕç. Те хĕрхенчĕç?

Вилес килчĕ манăн чикĕнсе.
Çĕçĕ ал айне лекмерĕ.
Пĕтес терĕм, çитрĕм тĕкĕнсех.
Пĕтеймерĕм эп, мел пĕлеймерĕм.

«Пурăн», - терĕм, ухмах пек кулса.
Аллăмсенчен çакса хучĕç.
Пурăнас килмерĕ çакăнса.
Вĕлермерĕç. Те... хĕрхенчĕç?

# *Тамăкра*

Сутăнчăксем-юххасем месерле яла çитсен
лекеççĕ тет тамăка, тамăк хуранне.
Сутăнчăксем - тĕпĕнче, юххасем - çӳлте
вĕсем.
Ай, пиçеççĕ тет вара ĕмĕр-ĕмĕрне.

Апла пулсан - хуп-хура чее тилĕ Мурхиле
хура ясар пикепе - вут-Сарепипе -
унта пырса лекмеллех! Кулянусăр, ахалех
киленмешкĕн ыр курса кунĕпе те çĕрĕпе.

Апла пулсан - Сарепи çĕн модăпа,
хальхилле,
утланса Мурхилене (пиçме пуçличчен тесе)
сиктерет сиккипеле тамăк ипподромнелле
леш тĕнчене чĕтретсе.

Çăварлăхлă Мурхилпе юланутçă сарпикен
хăйсем пек йăх-яхпала ясарла ăмăртмалла.
Дантен кунта çитмеллех (Данте кунта çук
иккен),
тамăка лекнисене пăхкаласа тăмалла:
ан çӳрейччĕр иртĕхсе унталла та
кунталла...

# *Ватă тус*

«Чун çунать манăн», - терĕн, каларăн,
чуну мар-тăр, чĕрӳ нăйкăшать.
Чун çунсан эс кун пек курăнаймăн -
сăн-питӳ чиперех курăнать.

Сан çине тертленсе эп пăхатăп,
шеллесе те каяп тупата.
Ват пуçна кулянса эс усатăн:
чăнахах-шим чĕрӳ ыратать?

Ыратма та чĕрӳ, тен, пултарĕ.
Мĕншĕнне те ху лайăх пĕлен:
кама çеç халиччен тĕп тумарăн,
халь çавна çӳçенсе асилен!

Асилсе кăкăрна сăтăратăн,
тек-текех: «Чун çунать», - текелен.
Ют çынна кăна мар, мăшăрна та
икĕпитлĕ пулса эс шеллен.

Эс чăнла хĕрхенмен пĕр чуна та,
пĕр ыр ĕç те туман эс чунран.
Чуну мар, чуну мар сан çунать-тĕр,
çунаймасть вăл... пачах та çукран.

... «Пытарма кил», - тесе ан чĕн, тусăм,
ан илсем юрилле ытама.
Ыталанă пулса, ăшăмра эп тĕвтурăм:
«Килейместĕп те пуль пытарма...»

## *Асанне*

Салтака ăсатрăр мана, -
хыт макăртăн.
Тунсăхларăм сире унта,
çыру çыртăм.

Вĕренме шутлап, тесессĕн,
пит савăнтăн.
«Лайăх вĕрен, ачам», - терĕн,
ырă сунтăн.

Килтен каяс терĕм,
ырламарăн.
Таçта кайса çухаласран,
тен, хăрарăн?

Хăвăн кайма вăхăт çитрĕ,
куçран пăхрăн:
«Ман пата час ан пыр», - терĕн
хуллен-шăппăн...

# *Аслати*

*баллада*

Вело çине иккĕн ларса
кăмпаран килетпĕр,
çăрăлчăка кĕрсе кайса
çавранса ӳкетпĕр.

Ял енне пăхма хăрушă,
çиçĕм - йăлтăр-ялтăр!
Кĕмсĕртетет чарăнмасăр
çӳлте - кăлтăр-калтăр!

Пĕлĕчĕсем шутсăр хăтсăр -
хура, таткаланчăк.
Тавралăх веç шӳсе кайрĕ -
пĕçтĕп таран пылчăк.

Çырма шывпа тулса ларнă,
кĕпере шыв илнĕ,
çырана çити хăпарнă -
юхса кайнă кимĕ.

Аслати кама çиленнĕ?
Унран хăшĕ тарчĕ?
Леш вĕçĕнчи урам тĕлне
шарт! кăна тутарчĕ.

Çав касра пурнатчĕ Петтăр,
ыр курса пурнатчĕ.
Вăрçа каймасăрах - паттăр.
Лĕкĕрт çеç кулатчĕ.

Тытса пăрахать тесе-ши,
вăрçăран вăл юлнă.
Хальхинче, ак, çав этемĕн
тинех шалçи тулнă.

Аслатийĕ - аслă ашшĕ
пĕррех кеплеттернĕ:
пит чее пулин те Петтăр,
çапнă та вĕлернĕ.

... Кăмпара пĕрле çӳренĕ
Петтăрăн лӳпперĕ
ашшĕн виллине курсан та
хыпăнса ӳкмерĕ.

## *Чун*

Хĕвел хытă хĕртет
тӳперен.
Ун хĕрĕвĕ сӳнет
каçсерен.

Тутăх çиет теççĕ
тимĕре.
Чуна мĕн çиет-ши,
мĕн хирет?

Кӳршĕрен пĕлесчĕ,
чунĕ чул.
Турăран ыйтас,
вăл илтес çук.

Тусăмпа пуль курса
калаçас,
ăнланĕ-ши хуйха
халь, наччас?

Хĕвел пекчĕ чунĕ
çуркунне,
тутăхса кайман-ши
кĕр енне?

# *Кĕтрĕм...*

Кĕтрĕм эп сана киле кĕмесĕр.
Кĕтрĕм эп ниме пăхмасăрах.
Утрăм эпĕ ывăна пĕлмесĕр
урлă-пирлĕ - пĕр сукмаксăрах.

Эсĕ курăнмарăн кун çути сӳнсессĕн.
Тĕтре витĕр курăнмарăн эс.
Утпа çӳрекен усал хыпар килсессĕн
юланутçине мĕскер теес?

Чĕрем сиснĕ усал хыпар çитрĕ.
Тăрса юлтăм эпĕ пĕр-пĕччен.
Атăл кĕр-кĕрлерĕ, чĕрем чикрĕ,
лăпланма пĕлмерĕ темĕнччен.

Хăнăхман сасса эп пăшал пенĕн
илтрĕм: эс сутни - инкек, инкек.
Эпĕ сана чарлан пулĕ тенĕ,
эсĕ шыв чăххи кăна иккен...

# *Хурлă шў́т*

Камăра та путрăм, Атăлта та,
ишсе тухрăм тур пулăшнипе.
Хамăр пĕвере чутах путаттăм
савние çавтер юратнипе.

«Юрататăн пулсан сикех, - терĕ, -
çӳ́ллĕ çырантан çак авăра.
Тухайсассăн - хам çинче сиктерĕп.
Тухаймасан - тухаймăн ара...»

Турă пулăшнипех ишсе тухрăм.
Нихçан манас çук ку авăра.
Савние савсах пуçа çухатрăм.
Луччĕ путмаллаччĕ Камăра...

# *Юрату вутĕнче*

Юрату вăл вут. Эп çунтăм, çунтăм.
Ăшалантăм çатма çинчи пек.
Тамăка çакланчĕ айван чунçăм.
Хăтăлтăм çапах та пит чипер.

Кăмăл çирĕп пулчĕ, тимĕрленчĕ.
Юрăхлă халь пулăп тимĕрçе.
Чунăм чăннипех те пит тертленчĕ,
юлма юлчĕ хăй çаплах çемçе.

Савнисем ман темшĕн пурте урчĕç -
вĕсенчен пĕри те хăтлă мар:
мăшкăллашрĕç, кулмаллипех кулчĕç,
пулмĕ санран, терĕç, пархатар.

Тин сăн-пит çуталчĕ, хурлăхлă тееймĕр,
чунăмçăм çунатлă - кайăкла вĕçет.
Ирĕклĕ халь эпĕ ирĕк кăйкăр евĕр.
Куçăм ырра сиснĕн çăлтăрла çиçет.

# *Улталарăн*

Качча пырап тесе ыталарăн,
пăхса тăтăн эсĕ хыçалла.
Çырăшма каяс чух улталарăн:
тухса шурăн хăвăрт таçталла.

Йĕлтĕрпе те эп сана йĕрлерĕм,
хăваларăм вичкĕн лашапа,
тем пек васкасан та çитеймерĕм -
юрĕ кăпăшланнă ăшăпа...

* * *

Куçа хупрăм та - умра пăч-тĕттĕм.
Çухалчĕ çут тĕнче, çухалтăм эп.
Куçăма курнать сар кун çĕршывĕ:
ем-ешĕл сад, хĕп-хĕрлĕ çимĕçсем...
Садра çӳретĕп эп, тавра - чипер хĕрсем.
Куçа уçас килмест.

Куçа уçрăм та - умра ахаль тĕнче.
Çухалчĕ ешĕл сад, çухалтăм эп.
Куçăма курнать дебил çĕршывĕ:
ватса пĕтернĕ сад, хуралнă çимĕçсем...
Садра çӳретĕп эп, тавра - çара хĕрсем.
Куçа хупас килет.

* * *

Çук, пулмарĕ авланса.
Илеймерĕм ăнланса
вăл мана юратманне.
Ĕнер илтĕм тавçăрса.

Пĕр вăхăтрах иккĕпе
ĕлкĕрет-мĕн савăшса.
Кайрăм унăн йĕрĕпе -
чут вилеттĕм аташса.

Те туслашнă усалпа?
Те хăй те вăл чăн усал?
Тăнă ман енне кутпа.
Мал енче - темле услап...

# *Савни*

Уртăнсан савниçĕм мăйăмран,
ах, чĕре сиксе тухатчĕ кăкăртан:
«Ах, хытă савать-çке ку мана!» -
савăнса шутларăм - тăмана.

Урăх çынна кайнине пĕлсен,
пĕр хушă хурланса çӳрерĕм.
Манран мăшкăллашнине илтсен,
чутах шыва сиксе вилмерĕм.

Хурланусем иртейсе пĕтсен,
тĕлĕнсе ун-кунăн пăхкаларăм.
Пуçри ĕрĕм-сĕрĕм сирĕлсе çитсен,
савăннипе сиксех ташларăм.

# *Тавах, савни*

Тахçан качча тухнă чун савнине
кайрăм курас тесе вĕсен ялне,
анчах та вăл мана асăрхасан
хăва хыçне тăнăваскасах.

Тепрехинче ăна курас тесе
çимĕк кунĕ пытăм «Мерседеспе».
Палланă-палламан хыт вăтанса
хĕрес хыçнех тăнă пытанса.

Каллех калаймарăм калас сăмахăма,
тата темчуль çунтартăм-ха ăшăма.
Виççĕмĕш хут килме май пулмарĕ -
машина моторĕ ванса кайрĕ.

Тен, çитĕп-ха тепре савни ялне.
Тен, калăп-ха, калас тенине.
Калаймасан вара çырса хурам,
мана качча тухманшăн эп тав тăвам.

Манăн мăшăр эсĕ пулса пурăнни
канăçсăр чунăма веç илетчĕ.

Атте-анне пехилĕ - турă пани
пуçламăшĕнчех пуль сӳнетчĕ.

Тавах сана, савни, тавах тепре.
Халĕ ĕнтĕ эпĕ Леш Черетре.
Эсĕ те çамрăк мар, эс - аллăра,
юлан ĕмĕрлĕхе - çак сăвăра...

# *Масар çинче*

Çакăнта тахçан сирень ӳсетчĕ.
Чим-ха, чим, халь те ӳсет мар-и?
Ашшĕн вилтăприйĕ инçех марччĕ,
хĕрĕн халĕ ăçтарах тăпри?

Шур юна кайса вăл вилнĕ терĕç.
Хĕрлине камсем шуратнă-ши?
Тусăма сирень парнелесеччĕ -
мĕншĕн çав тери юратнă-ши?

Шӳтлесе, тен, шӳтлесе те мар-тăр,
пуçтахланнă евĕр, ун чухне,
урăхрах çĕрте чечек тупмасăр,
килнĕччĕ кунта, масар çине.

Кĕр çитсен те çурхиллех саваттăм -
астра парас терĕм савнине:
йышăнмарĕ, парнене илмерĕ,
паш! пăрахрĕ сив тусан çине.

... Хурлă çыххăма алран ямасăр
эп шыратăп тусăн тăприне.
Ним пулман пекех, ниме пăхмасăр
эп хурап чечек хĕрес умне.

# *Мишер хĕрĕ*

«Хура вăрман урлă каçнă чух
вуник тутар тухрĕ вĕлерме», -
тесе юрлаттăмăр, манма çук,
юрататтăмăр çав шӳтлеме.

Вуник килрен халĕ пĕр çын юлнă,
вăл та пулин тĕне кĕнĕ чун,
ыттисем Чистая куçса кайнă -
пĕчĕк ялсене пĕтернĕ чух.

Кĕрешĕн тет хăйне, тутар мар-мĕн,
тутарла пĕлсен те ятлаçма.
Хĕрĕ вара, хĕрĕ - аçа-çиçĕм,
темĕнле те пĕлет калаçма.

Çав «çиçĕме» килне ăсатсаччĕ:
«Тутарах эс, - терĕм, - пит хаяр».
Пуçне пăркаларĕ: «Эс ху - хаяр каччă.
Тутар мар эп, - терĕ, - эп - мадьяр...»

# *Чиперкке*

Савни пулнă чиперкке
урамра тĕл пулчĕ.
Хăй вара çаплах ĕлккен,
çап-çавра-ха кучĕ.

Çуйăхать, ая кĕрет,
пăхать куç илмесĕр.
Тен, ун халь те... пĕлтлетет,
ватăлма пĕлмесĕр.

Яш чухне вăл манăнне
пурнăçа пĕтерчĕ.
Халь мĕнле тарас, мĕнле?
Пӳлĕхçĕм, пĕлтерччĕ...

# *Савнӑ арӑм*

1.

Савнӑ арӑм мана паян
хытӑ тарӑхтарчӗ:
юлхав терӗ, наян терӗ.
Каларӗ те тарчӗ.

Каçалапа ман пӳлӗме
каллех кӗрсе ларчӗ -
каçару ыйтас темерӗ,
хӑлха чикки пачӗ.

Юратса сана килмерӗм,
Змей Горыныч, терӗ,
урӑх çынна каясшӑнччӗ,
пӗри те илмерӗ.

Тавах сана, савнӑ арӑм,
ырӑ сӑмахушӑн,
сан умӑнта çук ман парӑм,
пурӑнах халь хушӑн.

Тата пурӑн ывӑлушӑн,
кинне те манмасӑр.
Ан çапӑçӑр пуршӑн-çукшӑн,
ытлашши ан асӑр.

2.

Пĕрре мар-ха аса илĕн
Змей Горыныч тенине.
Пĕрре мар эс сиксе тăрăн
тĕлленмесĕр тĕлĕкне.

Асăнăн çиччĕмĕшне эс,
асăнăн тăхăр куна.
Ирттерĕн хĕрĕхмĕшне те
хĕрхенсе вилнĕ çынна.

Хăвна шеллесе эп выртăп
лере, хура тĕнчере -
юратса санпа пурăнтăм
эп, ирттертĕм ĕмĕре.

Кĕтĕп сана каçăн-ирĕн
çитес вырсарникунччен.
Пурăн кăштах, пит ан хирĕл -
кинӳ чунна иличчен...

# *Тулли уйăх*

Тулли уйăх туллин асилтерчĕ
çурхи евĕр кĕрхи шăплăхра:
халиччен тĕлĕретчĕ чун терчĕ,
халь каллех чун йĕрет те макрать.

Таврана çурхилле туйса илтĕм!
Чĕрере ман каллех çуркунне!
Илтĕн, юррăм, эс çепĕççĕн илтĕн,
илт ăна, çӳл тӳпе, çĕр-анне.

Сăв çырмарăм яш чух, халь
çыратăп,
тупаймарăм телей, халь тупап:
ман телей вăл поэзи - çунатăп,
яш пекех эп çунатăп чунпа.

Тулли уйăх туллин асилтерчĕ...
Хыт юратнăччĕ эп... чун пĕлет...
Халиччен те сӳнмерĕ ун терчĕ.
Çав чун терчĕ терт мар, çут телей.

# *Хăват*

Сăвăлас меле пачах пĕлместĕм эпĕ,
уйăх, уйăх, эс мĕнле хăват?
Халь пултарăп-ши хама поэт теме те?
Шиклĕхе сан хăвату хăвать.

Сан çине пăхса хыт тĕлĕнсе тăратăп.
Хурал пӳрчĕ юмах пӳрчĕ пек курнать.
Йывăç тĕмĕ те, пĕр хускалми турат та
ытарми ытарлăха куçать, канать.

Çĕр çинче те, тӳпере те - канлĕх.
Ылттăн çумăр пек çăвать çутту.
Çавăрса илет чуна илем, тăванлăх.
Пĕтĕм çутă тĕнчепе халь эп тату.

Уйăх тулнă каç ман кăмăл тулнă!
Яшлăха кĕртсе яран асам
тухатать, пуçа çаврать, чĕнет ятуллăн,
çуратса чунра çап-çут асап...

## *Аксу çулĕ*

Астăвать-ши мана Аксу çулĕ -
çăпаталлă чăваш ачине?
Асилет-ши мана Сатук çăлĕ -
лап выртсах сиплĕ шыв ĕçнине?

Çулĕ те, çăлĕ те - тараватчĕ.
Çук, памарĕç ӳкме тăрăнса.
Ӳкесрен вăй парса-çке тăратчĕç:
утах, тетчĕç, турра асăнса.

Шкул çулне вунă çул такăрлатрăм.
Тур сыхларĕ, памарĕ пĕтме.
Ун чухнех эп çитме тĕллев лартрăм
пĕлӳсен çӳллĕ тăвĕ патне.

Килсе тухрăм, ак, халь çулсăр-мĕнсĕр,
вăрманта тупăнмарĕ леш çул.
Утрăм эпĕ вара тĕлсĕр-йĕрсĕр.
Ăçтарах-ши, ăçта-ши çав çăл?

Шел... Шапа пăттинче - Сатук çăлĕ.
Шурлăхланнă... Савап пурпĕрех.
Вăрманта пулминех Аксу çулĕ,
эп утатăп унпа пур-пекех...

## *Киреметайĕнче*

Шурлăх çийĕн вĕçет шур чарланĕ
шăплăхри Киреметайĕнче.
Иртĕ ĕмĕр, чĕрем те чулланĕ,
сӳнĕ вăл пурăнăç вĕçĕнче.

Пуçсăр марччĕ-çке, пуçсăр марччĕ.
Çивчĕ куçлăччĕ ĕмĕт-тĕллев.
Ăçта кайрĕ вăл, хăçан çухалчĕ?
Çĕтрĕ, пĕтрĕ çав ĕмĕт-телей.

Çакăнта ача чух ĕмĕтленнĕ
ĕмĕтсен ытарми çутинче
шурлăх çийĕн вĕçет тискерленнĕ
çăхан евĕр чарлан темĕнччен.

Унăн килĕ, телейĕ çак шурлăх.
Ырлăхĕ унăн çак шурлăхра.
Килеймерĕ ман пурăнăç тулăх,
пурăнтăм нушара, çуклăхра.

Ухмах марччĕ-çке, ухмах марччĕ!
Пĕлеймерĕм çапах пурăнма.
Турă манчĕ мана, турă манчĕ,
хам та мантăм пулас туррăма.

Тен, чĕрем те халь манăн чулланнă,
сӳннĕ вăл пурăнăç вĕçĕнче?
Шурлăх çийĕн вĕçет шур чарланĕ...
Эп пĕччен - Киреметайĕнче...

## *Кайăк кăвакалсем*

Кайăксем! Кăвакалсем! Пăр шăннă!
Вăхăт çитнĕ, çула тухмалла.
Йышлăн мар та, пурпĕр карталаннă,
хĕртĕнеççĕ кайма ăшшалла.

Кăшкăраççĕ, авă, залив çийĕн,
çаврăнаççĕ вĕçсе тавраллах.
Тен, сывпуллашаççĕ каяс умĕн?
Пехил пултăр вĕçме малалла!

Сăнаса тăратăп вĕсене эп
хураллакан объект умĕнче -
вĕсемпе пĕрле таçта каяс пек.
Ав мĕлтлетрĕç уйăх тĕлĕнче.

Çулĕ - çывăх мар та - илĕртӳллĕ.
Миçен таврăнайăр-ши калле?
Таврăнсанччĕ эсĕр пурте сывă.
Кĕтсе илĕттĕмĕр çуркунне...

# *Курмилле вăрманĕ*

Аташтарать тетчĕç Курмилле вăрманĕ.
Пурăнать кунта-мĕн Усал-Арçури:
çулла час-часах-мĕн çĕмрĕлет кăрманĕ,
сив хĕле кĕрсессĕн арканать çуни.

Аннепе кунта эп ĕне кӳлсе килнĕ,
вут-шанкă турттарнă кĕрхи сивĕпе.
Арçури тухмарĕ, те ĕнтĕ вăл вилнĕ,
тĕл пулма пӳрмерĕ усал-тĕселпе.

Атте таврăнсассăн лаша кӳлес терĕ.
Çӳрерĕмĕр шăппăн çуна йĕрĕпе.
Кайран, эп ӳссессĕн, Усалсен Эшкерĕ
пире хыт йĕрлерĕ пурнăç тăршшĕпе.

Тунсăхлать пире халь Курмилле
вăрманĕ.
Килеймест пĕри те курма иртнине.
Курас килет питĕ çав çулсен тусанĕ,
Арçури тусанĕ, епле вĕçнине...

# *Тилĕ*

Эпĕ пулнă ун чух миçере?
Хура вăрман хăрататчĕ, шухăччĕ.
Кĕрес теттĕм сарă тилĕ пур çĕре.
Хура вăрман каш-кашлатчĕ шухăшлăн.

Каллех вăрман хĕрне эп çитрĕм,
тавраналла пăхрăм сăнаса.
Шалалла кĕрес темерĕм, иртрĕм,
тăтăм темĕскертен хăраса.

Пурччĕ кунта, пурччĕ чее тилĕ.
Курăнмастчĕ. Тен, таратчĕ вăл хире?
Ни чĕрĕ тăраттăмăр, ни вилĕ:
курăнсанччĕ хуть пĕрре пире!

Çулсерен пыратăп ĕнтĕ ватăлса.
Курас килет манăн çав тилле.
Ун чухнехи пек халь çап-çамрăк пулсан,
тытăттăмччĕ ăна чĕрĕлле...

## *Çармăс шурлăхĕ...*

Кунти шурлăхра пулманччĕ,
килсе куртăм тин.
Чĕрем хурлăхпала тулчĕ
ман - чăваш ачин.

Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть ун,
тăсăлать таçтах.
Каçченех çапла ашсассăн,
çитĕп Кировах.

Çармăс çĕрĕсем хĕн-хурлă,
шăпи çутă мар.
Кăна пĕлет пур тавралăх,
пĕлет Когояр.

Киров-Вятка кĕпĕрнине
Чăваша кĕртсен,
чĕлхине, йăли-йĕркине
пуçпех пĕтерсен,

хам ирĕкпех килĕп шура
торфă кăларма -
хурлă сăвă çыра-çыра
шурлăхра путма...

* * *

Пĕртен-пĕр çăлтăр çунчĕ тӳпере.
Мана вăл туйăнчĕ юлташ пекех.
Пĕр шиксĕр эп çӳрерĕм тĕттĕмре.
Объект эп хуралларăм çĕрĕпех.

Хура, хаяр, усал пĕлĕтсене
çил кӳчĕ, хăваларĕ анăçран.
Чун пĕр пăчăртанать, пĕр хĕсĕнет
тӳпе кашти ак-ак хуçăласран.

Пĕртен-пĕр çăлтăр сӳнчĕ тӳпере.
Ман çăлтăр мар-ши? Юлташ мар,
эп хам?
Эп вилĕм çитнĕн туйрăм тĕттĕмре.
Упра мана, сыхла, умри хапха...

## *Хуралта ларнă май...*

Хуралта ларнă май шухăшлатăп:
«Сăввуна ма çыратăн, Иван?
Эс çапла хăтланни кулăшла-тăр -
чипер çынччĕ унччен, халь - тăн-тан.

Сăвăçсем сансăрах çĕрĕн-пинĕн,
генисем те çĕршерĕн, айван.
Вулама сăвăсем çук-им пирĕн?
Проза çыр эс, прозаик Иван.

Проза çыр... çыртăм эп... вуламаççĕ.
Кĕнеке вуламасть халь этем.
Сумра мар халь никам хушамачĕ.
Этем мар халь этем, элле тем.

Пурпĕрех эп çырап-ха, çыратăп,
пин çынран пĕр çынни вулатех.
Сăвă хыççăн эп сăвă çуратăп -
вулакан тупăнать, пулатех.

Пулмасассăн вара, савнă тусăм,
пырса парăп сана сăввăма:
куçу хурлă атту, пуçу усăк -
пырса парăп çунма, савăнма...»

# *Услей*

Сӗмсӗр сӑвӑç, намӑссӑр Услей,
вӑрçӑран тарса, чире персе,
сакӑрвунӑ çич çулне вӗçлет,
вилччӗр вӑрçӑра, тет, ухмахсем.

Чӗр ухмах ман Микулай кукка:
хӑй ирӗкӗпе вӑрçа кайса,
пӗр-пӗччен чарма тӑрать танка,
сирпӗтсе ярать айне выртса.

Сӗмсӗр сӑвӑç, намӑссӑр Услей
паттӑра мухтать пуш сӑвӑпа,
çӗнтерӳшӗн çакӑн пек ӗçлет,
кӗрешет - мухтавлӑ çавӑнпа.

Чӗр ухмах куккаçӑм ман, ухмах.
Сӗмсӗр сӑвӑç ӑслӑ, ухмах мар.
Халӑх сӑвӑçӗ пуласшӑнах
пулнӑ вӑл ун чух чее, вӑр-вар...

# *Графоман*

Чапшăн çунас йăла çуккипе
çӳреместпĕр эпĕр сиккипе
хыт ăшталанса та сĕкĕнсе,
патшасем асăрхасса кĕтсе.

Асăрхаççĕ патшасем хăçан?
Кăтăр-кăтăр! çăмарта хыççан.
Мухтасах тăрсан çине-çине,
çуласах тăрсан кучĕсене.

Юрама пĕлсен, йăпăлтатсан,
çак ĕçе тусан чăнла, тасан,
йăпăлтатнине систермесен,
пит чеен кут çулама пĕлсен.

Урăх кирлĕ мар нимле талант!
Сăвву мар сана халь çын тăвать.
Вăл мĕн иккенне пĕлмен услап
çын тума, ятсем пама пуçлать.

Орден, звани, юбилей, банкет...
Хыççăнах, ак, çĕн хваттер лекет.
Чаплă çын халь сăвăç-графоман:
пурнăç лайăх, патшасем аван.

Пулĕ çитес çывăх вăхăтра
виличчен илсе тăрас нухрат...
Вилнĕ-вилменех вара ăна
палăк лартĕç, çав графомана.

## *Тĕп масар*

Карачура ялĕ çул леш енче.
Çул ку енчи хирĕ унăн мар.
Хула туртса илнĕ уй пеккинче
туса хунă халĕ Тĕп масар.

Ку масар та часах тулса ларĕ,
чарас тейĕç, чарас, кĕртес мар, -
пирĕн пеккисене пăрса ярĕç...
Кĕртмесен вара ăçта каяр?

Масар хĕрне ларса шухăшларăм:
«Масар тавра ял нумай сĕре.
Унта пурăнакан хăрăм-харăм
вилсен ăçта кĕрĕ, хăш çĕре?»

Шухăшларăм татах, пăхкаларăм.
Тăван ялăм пур килте вилме!
Сиксех тăтăм эп, саспах каларăм:
«Кĕтĕр! Пырас тетĕп килĕме...»

# *Халăх сăвăçĕ*

Эс поэт пуласшăн пулнă теççĕ...
Кулăшла ку, кăйттă халь янрать.
Халăх сăвăçĕ ятне, ентешĕм,
илтĕн эс - аван, мĕнех, юрать.

Сăвăç эсĕ, поэт мар, такмакçă!
Нихăçан тухаймăн поэта.
Поэтсем те сăвăça тухмаççĕ -
мĕн-тĕр кансĕрлет, тем пăвăртать.

Мĕн-ши? Тур пани-ши, паманни-ши?
Кирлĕ пуль çапах та тур пани?
Тур паман пулсан эс мĕскĕн, нишлĕ,
кукăр çул шыран вара, ами.

Чун-чĕрӳ сан сисĕнкĕсĕр сивĕ -
çул çухатнă музăсем патне.
Ăшăх туйăм, сисĕнкĕсĕр сисĕм
путлантарнă санăн ĕмĕтне.

Вут чĕресĕр вутланаймĕ шухăш!
Сисĕнкĕсĕр чун (ĕнерĕве
çаврăнса) юрлаймĕ çепĕç, шухă.
Шанмĕ çын чунри ĕненĕве...

# *Иртмест...*

Çаплах çăхан кăранклатать пуç çийĕн,
çаплах çумрах, ав, шăхăрать çĕлен.
Лăскарĕ пурнăç тăвăллăн та çиллĕн,
авсах хуçать пуль теттĕм эп çуллен.

Паян хуçмин, ыран хуçать пуль теттĕм.
Çапла пытарăнчĕ çул хыççăн çул.
Чуна çисе хала хавшатрĕ тертĕм.
Çапах упранчĕ хал, пĕтмерĕ чун.

Хура çăхан куçа чавса илесшĕн,
хура çĕлен ĕмесшĕн мимене.
Тус-тăвансен ăшне шуйттан илешнĕ:
тусне персе чикесшĕн тĕрмене.

Е - шăтăка... Тус-тăвансен каварĕ
çаплах хаяр, иртмест çул иртнĕçем.
Çавна курса чĕремĕн шĕл-кăварĕ
хĕрсех пырать, хĕрет вăл хĕрнĕçем.

# *Ăçталла?*

Телей пурах пуль ман - пĕтмерĕм.
Пурах апла-тăк - ăрăскал.
Чĕрем тапать, шăтман пĕверĕм.
Юн сивĕнмен, чакман ăс-хал.

Чăнах калап сире, тунмастăп,
кайман-ха эпĕ ват енне.
Эп ватăлсан та ватăлмастăп,
пăсап туссен хура юнне.

Ах, вăтăр çул çăхав çыраççĕ!
Талантсăр имĕш эп, тăшман.
Вĕсем анчах-мĕн - чăн çыравçă,
вĕсем анчах-мĕн - аташман.

Эп - пăрăннă, çултан аташнă,
пĕччен утатăп таçталла.
Ултавпала суя - юлташлă,
вĕсен тӳп-тӳрĕ утмалла.

Вĕсемпеле пĕрле тус-йыш та
утатчĕ коммунизмалла.
Халь ăçталла утать пит йышлă?
Те унталла, те кунталла?

# *Хура*

Йӳçет тус-юсӑм, витӗр кураймасть!
Çавна куçран хальччен те калаймасть,
тек пытарать, тек пытанать, мӑнтарӑн,
анчах та ӗçӗ тӗплӗ пулаймасть,
пула пӗлмен ӗçе епле пултарӑн?

Хура ун курайманлӑхӗ, хура.
Хура пулин, Иван, эс ан хӑра.
Ӑмсанӑвӗ те, кӗвӗçни те - пурте
хура ун пек этемккесен ара.
Хура пулин, мӗн тӑвӑпӑр-ха, пултӑр.

Çуталмӗ çав, хӗрелмӗ хура юн.
Çут ӗмӗт-туйӑм, шухӑш уншӑн ют.
Усал эсрел ыр кӑмӑллӑ пулаймӗ.
Пӗр ыр чуна та вӑл кураймӗ юп -
хӗпӗртесе йӑвашшӑн йӑл кулаймӗ...

# *Упăтесем*

Килтĕм. Çитрĕм. Савăнса йĕмерĕр.
Пулчĕ пурăнăç - амаçури.
Хытă пăвăртарăр, хыт йĕрлерĕр,
кайтăр терĕр çурăлса чĕри.

Яш чĕремçĕм çурăлса каймарĕ,
пиçĕленчĕ тӳснĕ май хĕн-хур.
Хитреленчĕ пурăнăç юмахĕ,
ĕмĕр тăршшĕпе савмалăх пур.

Эп курман хальччен кун пек хаярлăх,
вăрттăн тавăру, элек. Курман.
Ĕçĕм-пуçăм япăхран та япăх,
пурпĕр чĕремре çут хĕм пур ман.

Хуплаймарăр, ним те тăваймарăр!
Чун-чĕремçĕм вут-хĕм сирпĕтет.
Ма ун чух пĕлмерĕм эп, айван ăс:
пурте, пурте эсĕр - упăте...

# *Çиллĕ каç*

Çиллĕ каç эп чĕрĕлетĕп,
юнăм вĕреме кĕрет.
Куç хупмастăп çĕрĕпе те
сыхă тăнăн чикĕре.

Чикĕрен кая-и манăн
çак объект? Сых тăмалла!
Çумăр-и тулта, тăман-и,
утмалла калла-малла.

Çилсене эп юрататăп,
юратмастăп çумăра.
Сăвăпа та, юрăпа та
тултаратăп çăвара.

Çиллĕ каç çиле мухтатăп,
çилсĕр каç - çăлтăрсене.
Çĕрĕпех çапла утатăп,
юратса çут тĕнчене...

# *Пейзаж сăвви*

Пейзаж сăвви çырас тесе
çĕрĕпех шутларăм.
Хурал йытти хыт вĕрсен те,
пуçа кăлармарăм.

Яш чухне сăрт хĕррисенче
пейзаж пит хитреччĕ.
Сăрт айĕнчи шăнкăр шывĕн
сасси илтĕнетчĕ.

Ӳхĕм-хӳхĕм чун савнийĕм
çĕрпӳртре пурнатчĕ,
эпĕ килнине сиссенех
сăрта хăпаратчĕ.

Кăвак çĕмĕрт çеçкисене
ăш çил çупăрлатчĕ.
Шăкăл-шăкăл калаçнине
саркайăк тăнлатчĕ.

Халĕ çавăнта ларать-мĕн
пысăк экскаватор.
Çĕмĕрте те, çĕрпӳрте те,
ак, часах хуплать-тĕр...

# *Ту çине...*

Авалхи ту çине хăпармашкăн
юриех сыртăм эп çăпата.
Таврана сăнама, шăп лармашкăн
тупăнайрĕ темле тунката.

Авал чух мĕнле пулнă çанталăк?
Пĕлес килчĕ, туссем, çав терех.
Мĕнлерех курăнайнă тавралăх?
Пулнă-ши хир-вăрман хӳхĕмрех?

Айлăма шур тĕтре карса илчĕ,
йăлт хупларĕ, çĕр çийĕн шуса.
Пур тĕнчемĕр куçран, ак, çухалчĕ:
авалхи те хальхи - пĕр пейзаж.

# *Çак пейзаж...*

Хура пĕлĕт Хурал Тăвĕ çийĕн
унталла пĕр юхать, кунталла.
Çĕршыва çичĕ ют пусса илнĕн
курăнать пек. Мĕскер тумалла?

Авалхи несĕлсем сыхă тăнă,
çич юта çывăха та яман.
Паянхи чăваша темĕн пулнă:
çук, вăл мар халь чăн-чăн аптраман.

Таврана шур тĕтре карса илнĕ.
Курăнмасть - Хурал Ту, çук - чăваш.
Тен, хăй мар, чунĕ ун, чунĕ вилнĕ?!
Чĕрене каскалать çак пейзаж...

* * *

Ешӗл-ешӗл хурӑнӗсем
чиркӳ патнех тухайнӑ.
Килме пулнӑ савниййӗсем
элле таҫта ҫухалнӑ.

Тен, вӗсем таҫтах та мар-тӗр?
Тен, шалта-тӑр - чиркӳре?
Турӑ илттӗр тес, вӑй патӑр,
пехил патӑр ӗмӗре?

Сарӑ-сарӑ хурӑнӗсем
ҫаплах кӗтсе тӑраҫҫӗ.
Килме пулнӑ савниййӗсем
ниҫта та курӑнмаҫҫӗ...

* * *

Унччен сарӑ пулнӑ,
халӗ веҫ хуралнӑ
карталанса тӑнӑ ҫӑкасем
ытла ир ҫаралнӑ.
Камсем хывӑнтарнӑ?
Халь ӑҫта ҫавсем - савниййӗсем?

## *Анне пур та...*

Атте çук халь, анне пур -
сакăрвунă пиллĕкре.
Анне пур та, эп сатур
хӳтлĕхре те пиллĕхре.

Хӳтĕлет анне хӳтти,
вăй парать те хал парать.
Пит аван анне кунти -
пил парсах анне тăрать.

Эп анне хӳтлĕхĕпе
сывă юлтăм вилесрен.
Эпĕ унăн пилĕпе
пысăк ӳсрĕм хам ĕçре.

Чунĕнчен çапать хĕрӳ,
ăшăтса пур ачине.
Пĕтĕм ывăлу-хĕрӳ
пуç таять сана, анне.

Кашниех ĕçчен хăй май.
Кашниех маттур, таса.
Пул-ха, пурăн-ха нумай
эс - пире савăнтарса.

Савăнтар мăнуксене.
Ылттăн пек мăнукусем
«кукамай» та «асанне»
тесе çеç тăраç - пĕлсем.

Кашниех курнать сатур.
Кашниех савать яла.
Эсĕ пур та, пурнăç пур.
Пул-ха, пул, пулсам ялан...

## *Шыв хĕрринче*

Шухăшларăм, шухăшларăм,
шухăш вĕçне тухаймарăм,
тухас патнех çитнĕччĕ,
туйăм килсе ĕлкĕрчĕ,
каллех шухăш çуратрĕ,
шухăш чуна пăлхатрĕ.

Пăлхавлă чун пăр хускатрĕ,
унпа пĕрле юхса кайрĕ,
ял пĕвине пĕвенчĕ,
пăрпа пĕрле ирĕлчĕ:
шыва путнă шăллăмăнне
ача чунне шырарĕ-мĕн...

## *Юрă*

Саврăшпуç пĕвине юр шыв тулнă,
татăлса каяссăн курăнать.
Анне çине пăхсан чун хурланать,
уйрăлса каяссăн туйăнать.

Саврăшпуç пĕвине пăр шыв тулнă,
татăлса каяс пек курăнать.
Анне çине пăхсан чун ыратать,
урăх курас çук пек туйăнать...

## *Прожектор*

Ун çути асамлăн кăтартать
хитрех мар кĕрхи пĕлĕтсене.
Ун çути таçта çити тартать
сапаланнă вак çăлтăрсене.

Çĕклет, çĕклет Чăваш Амăшне
çӳлĕрен те çӳллĕ тӳпене,
курăнайтăр тет чăвашсене -
таврари е тулайрисене...

# *Хурлатчĕç*

Пурнăç çутă марччĕ, тĕксĕм.
Питĕрех мана хурлатчĕç.
«Эпĕ хам начар пуль?» - теттĕм
аптраса вара... Кулатчĕç.

Шурĕ пурнăç, иртрĕ пурнăç -
те сăпайлăн, те пуçтаххăн.
Мĕн ĕç турĕç, мĕн ыр турĕç -
хурлаканăмсем ăçта халь?

Ах, ытла та аван мар-иç:
тĕлсĕр çĕтрĕç те çӳрерĕç,
ним ыр ĕç те тăваймарĕç,
мухтава тивĕçеймерĕç.

Пурăнăçĕ пулчĕ тĕксĕм...
Кам мана сиксех хурлатчĕ,
чунĕпе-мĕн пулнă тĕттĕм.
Эп хама начар пуль теттĕм,
пулнă-мĕн начар - кулавçă...

# *Кĕрхи кĕвĕ*

Чăштăр-чăштăр çулçăсем
çумăр пек ӳкеççĕ.
Лĕштĕр-лĕштĕр çумăрсем
тăнăма илеççĕ.

Çутçанталăк макăрать,
кам-тăр кайнă, илтрĕм.
Кĕл улми кăмакара
пиçнĕ пулĕ, илтĕм.

Турăхпа сыпса çиме
кĕл улми пит меллĕ.
Тăлăх мар-ха саççимех -
киллĕ эп, çемьеллĕ.

Ватлăхра çак нушана
эп çеç мар тӳсетĕп:
«Пĕрре кӳлнĕ лашана
тăвармаççĕ, - тетĕп. -

Турт, ан пус апла-капла.
Самани те кăйттă,
çыннисем те - асаплан,
лаша евĕр кăйкăр.

Вĕçĕн - хуçĕç çунатна,
шатăрах тутарĕç.
Тăрăш, ман эс кил-çуртна, -
те чура, те тарăç.

Мăнтăр пурнăç какăртать,
выçă - какăрмастăп.
Çитмен пурнăç макăртать,
чухăн - макăрмастăп.

Какăрччĕр пуяннисем,
какăртăр пур мăнтăр.
Какăраймĕç кăннисем -
кăнманнийĕ кăнтăр.

Лĕштĕр-лĕштĕр çумăрсем
кăнасса кĕтеççĕ.
Чăштăр-чăштăр çулçăсем
çумăр пек ӳкеççĕ...»

# *Кайӑк хурсем*

Сивве сиссе ӗнтӗ сисӗнчӗклӗн,
кайӑксем пуҫтарӑннӑ кайма.
Вӗҫеҫҫӗ, ав, курӑр, вӗҫеҫҫӗ,
Чӑваш Амӑш тавра тирпейлӗн
вӗҫеҫҫӗ - мӗнлерех вӗҫеҫҫӗ!
Илӗртӳллӗх пӑхтармӗ кама?

Ҫамрӑк кайӑк хурсем вӗҫеҫҫӗ,
хӑнӑхаҫҫӗ вӗҫме картипе,
каяс ҫулне-йӗрне тӗшмӗртеҫҫӗ,
кама-тӑр ҫав тери кӳренеҫҫӗ.
Вӗҫеҫҫӗ, ав, шавлӑн вӗҫеҫҫӗ.
Тен, сывпуллашаҫҫӗ Амӑшпе?

Вӗҫсе иртеҫҫӗ-ҫке, мӗлтлетеҫҫӗ
ҫӑлтӑр витӗр, уйӑх ҫутипе,
курӑнмиех пулса ҫухалаҫҫӗ,
кӑмӑлӑма ытла пӑлхатаҫҫӗ,
темле асам ярса тухатаҫҫӗ.
Вӗҫетӗп пек хам та вӗсемпе.

## *Хамах...*

Усал сарать усал сӑмах.
Сывалмӗ. Кам сываттӑр!
Тӳрех калам: ҫырап хамах
юрра та эп, сӑвва та.

Роман ҫырса паман пичче.
Роман - виҫ кӗнекеллӗ.
Романӑн ячӗ «Ҫут тӗнче».
Роман ҫӗршер хутъенлӗ.

Сӑвва ҫырса паман кукка.
Ҫырман тӑхлачӑ повӗҫ.
Усал, ан суй, ан ту какка.
Ан кӗт, ним ҫырса памӗҫ.

Гамзатова еврей ҫынни
ҫырса паман, хӑй ҫырнӑ.
Вӑл маншӑн та ют ҫын ҫырни
пулса юлать ют ҫыннӑн.

Мӗн-ма тесен ҫырап хамах,
ман пек никам ҫыраймӗ.
Усал сарать усал сӑмах.
Вӑл ыр сӑмах сараймӗ...

* * *

Пулман эпир хаяр,
ыр кăмăллă, тен, пулнă.
Тен, çавăнпа çука та,
сумсăра та юлнă.

Кĕтмен кун пек куна.
Атьсем, хура кун çитрĕ!
Çухалчĕ чыслăх çыннăн,
намăс-симĕс çĕтрĕ.

Пулас темен хаяр,
ыр кăмăлшăн тимленĕ.
Пире хура кунсем
шăп чĕререн тĕлленĕ...

# *Пӳртре*

Пӳрте кӗмест текех этем.
Тӗрӗслекен мент шаккиччен
кӑштах канса илесчӗ теп,
пӳртре ларатӑп пӗр-пӗччен.

Çутта сӳнтернӗ, çук сас-чӳ,
каç лӑпкӑ - канӑç килмелле.
Килмест-çке канӑç, канӑç çук:
мӗн тейӗп эп, мӗн темелле?

Пӑшӑрханса эп шухӑшлап
чӑваш пуласлӑхӗ пирки.
Пӑхсан, çак питӗ кулӑшла:
ухмах эп, пур-ши ман пекки?

Чӑваш пӗтет тесе чуна
хӗнетӗп эпӗ ир те каç:
çунап, çунмаллипех çунап,
пӗлместӗп лӑпланмашкӑн пач.

Патшарисем çунмаççӗ тем
хӑйсем чӑваш пулсассӑн та.
Пӳрте кӗмест текех этем.
Пуç йывӑр... Чирлӗ эп... Шӑнтать...

# *Шăна*

Шутласан, эп кам? Шăна.
Е кăмпаллă тунката.
Сум пĕтет çав, хавшанать
ватăлсассăн, тупата.

Тепĕр май шутлан та, çук,
шăна мар, тунката мар.
Мĕн вăл маншăн утмăл çул.
Пур хунав ман, пур тымар.

Кăшт талант тенийĕ пур.
Çыртăм кĕнеке чылай.
Ахпăлат,  Кулюк,  Якур,
эсĕр - эп. Çапла. Алай.

Хăваратăп çĕр çине
эпĕ хамăр сывлăша.
Çавăнпа пуль ирчченех
эп çыратăп, тăрăшап.

Хураллланă нухратпа
кăларатăп кĕнеке.
Мана çук халь хăратма.
Эпĕ кам? Чун кĕнекен.

Чун хĕнетĕп хамшăн мар.
Атьăр ăслăн тĕвтăвар:
кашни çын пуль вăл шăна,
пулмасан хунав, тымар...

* * *

Сарă çулçăсем, хĕрлĕ çулçăсем...
Ах, кĕрхи кăра, тулăксăр çилсем.

Сукмакпа утап, пуç усса утап,
шăппăн утнăçем шухăша путап.

«Ах, Иван, Иван, - тетĕп эп хама, -
чунлă-çке ытла, хывнă эс кама?»

Хуравлап хамах: «Хывнă аннене.
Вăл çапла, анне, туять тĕнчене.

Ыр çынна шеллет, чĕрчуна шеллет,
çич ют хуйхине те ăнланма пĕлет...»

# *Сенкер шел*

Сенкер шел
çыхса тухнă, тусăм, эсĕ.
Ахтур шеп!

Сенкер шел
тĕслĕ санăн мăшăр куçу -
килĕшет.

Сенкер шел...
Чунçăм ĕмĕр лăпкă мар ман -
кӳлешет.

Сенкер шел
ĕмĕрне те асран тухмĕ
ĕнтĕ, шет.

Сенкер шел...
Çамрăк ĕмĕр иртсе кайрĕ.
Мĕнпур ĕмĕр иртсе кайрĕ.
Ахтур шел.

# *Кăвак куçсем*

Хĕвеллĕ кунччĕ, чĕкеçсем вĕçетчĕç.
Куçран пăхатчĕç кăн-кăвак куçсем.
Хуралчĕ пĕлĕт, аслати кĕçенчĕ.
Хĕвел пытанчĕ, çĕтрĕç чĕкеçсем.

Шăпамăрсен усал иккен пахмачĕ.
Уяр кун çук, çук уйăхлă каçсем.
Кăвак куçсем текех куçран пăхмаççĕ.
Яланлăх хупăнчĕç кăвак куçсем.

Çурхиччĕ кунĕ, ĕмĕтсем вĕçетчĕç,
ĕмĕтсем пек тасаччĕ çăлкуçсем.
Çăлкуçсенчен сиплĕ шывне ĕçетчĕç
манран та çамрăкрах яш-çамрăксем.

Çур кунĕ çук, çăлкуçĕсем хупланчĕç,
вĕçме пăрахрĕç çутă ĕмĕтсем.
Хура, хаяр кунсем килсе капланчĕç.
Иртсе-çке кайрĕç çамрăк ĕмĕрсем.

Хĕвеллĕ кунччĕ, ватлăхсем инçеччĕ.
Çӳл тӳпере вĕçетчĕç чĕкеçсем.
Саватпăр тетчĕç, тыткăна илетчĕç,
куçран пăхатчĕç кăн-кăвак куçсем...

# *Ылттăнăм çук...*

Ылттăнăм та çук ман, кĕмĕлĕм те
тăвансене парса хăварма.
Ĕмĕрĕм ман иртсе пырать ĕнтĕ,
пĕлеймерĕм пуль çав пурăнма.

Çынсем вăрланă чух вăрламарăм.
Анне вĕрентмерĕ вăрлама.
Çынсем вĕлернĕ чух вĕлермерĕм.
Атте вĕрентмерĕ пуç касма.

Пĕлеймерĕм çынна юрама та...
Юратмарăм усал çынсене.
Памарăм эп маххă никама та,
сирсе çеç пăрахрăм вĕсене.

Укçам та çук манăн, пурлăхăм та,
мĕн парса хăварăп ачана?
Çап-çара йывăç пек эпĕ хам та.
Ман çинче ларать пек тăмана.

Ĕмĕрĕм ман иртсе кайрĕ ĕнтĕ.
Утçăм çапах юртать-çăрхалать.
Асăнмалăх хăварас пуль тетĕп
ик роман, вун повĕç, çĕр калав...

* * *

Ташлама ăстаччĕ эпĕ,
ташлаймарăм -
хевтем пĕтнĕ.

Юрă манăн пурччĕ, юрă,
юрлаймарăм -
сассăм çĕтнĕ.

Тăван шăллăм пычĕ пĕрре,
тăраймарăм -
халăм пĕтнĕ.

Кăмăлăм начарччĕ-япăхчĕ те,
юраймарăм -
шанăç çĕтнĕ.

... Каймалла пуль терĕм,
аннем чĕнчĕ - йыхрав пулчĕ.
Тĕтреленнĕ мăшăр куçа
куççуль тулчĕ.

Анакан хĕвелĕн
юлашки хĕлхемĕ
алăкăн-тĕпелĕн
выляса йăл! сӳнчĕ.

# *Т У П М А Л Л И*

Михаил СЕНИЭЛЬ. Çамрăк поэт (ум сăмах)........................................5

**Сăвăсем**

«Лайăх сăвă шăратма...»..........................9
Пурнап..................................................10
«Атте пирĕн - лере»..............................10
«Тавай тарăн шыва чăмар-и»................11
Утрăм....................................................12
Хурал пӳрчĕ..........................................13
Тĕкĕр умĕнче........................................14
Чирлĕп...................................................15
Пĕр анне кăна.......................................16
Аса илӳ...................................................17
Çӳллĕ çыранта... ..................................18
Анне ялĕ.................................................19
«Таркăн ялĕн пĕр урамĕ».....................20
Атте.......................................................21
«Чунăм вилнĕ ĕнтĕ...»...........................22
Ӳкĕнĕç....................................................23
Шурă лĕпĕш...........................................24
Тĕлĕк......................................................25
Сад пахчинче.........................................26
Çумăр çитнĕ..........................................27
Мĕн кĕтмелле?.......................................28
Юхать çумăр шывĕ...............................29
Объект....................................................30
Амăшĕ.....................................................31
Яхта.......................................................32
Хуралта..................................................33
«Пĕртен-пĕр çывăх юлташăм»..............34
Нимĕн те юлмарĕ..................................35
Тутар ялĕ................................................36

Кайăк....................................................37
Микул тусăм... ....................................38
Кут Ларивано̆........................................39
Кзот Ваççи...........................................40
Шĕв Сăмала.........................................41
Çерçи....................................................42
Айхи.....................................................44
Акивер..................................................45
Чапай....................................................47
Дон Педро............................................48
Çĕнĕ йышши телефон..........................49
КПЗра, хĕсметре... ...............................50
Тамăкра................................................51
Ватă тус...............................................52
Асанне.................................................53
Аслати.................................................54
Чун......................................................56
Кĕтрĕм... ............................................57
Хурлă шӳт...........................................58
Юрату вутĕнче.....................................59
Улталарăн.............................................60
«Куçа хупрăм та...»..............................60
«Çук, пулмарĕ авланса...»....................61
Савни....................................................62
Тавах, савни... .....................................63
Масар çинче..........................................65
Мишер хĕрĕ..........................................66
Чиперкке...............................................67
Савнă арăм............................................68
Тулли уйăх............................................70
Хăват....................................................71
Аксу çулĕ..............................................72
Киреметайĕнче......................................73
Кайăк кăвакалсем..................................74
Курмилле вăрманĕ.................................75

Тилĕ.......................................................76
Çармăс шурлăхĕ.....................................77
«Пĕртен-пĕр çăлтăр...»...........................78
Хуралта ларнă май... ..............................79
Услей.....................................................80
Графоман...............................................81
Тĕп масар...............................................82
Халăх сăвăçĕ..........................................83
Иртмест... ..............................................84
Ăçталла?................................................85
Хура.......................................................86
Упăтесем.................................................87
Çиллĕ каç...............................................88
Пейзаж сăвви..........................................89
Ту çине... ...............................................90
Çак пейзаж... .........................................91
«Ешĕл-ешĕл хурăнĕсем...»....................92
«Унччен сарă пулнă...»..........................92
Анне пур та... .........................................93
Шыв хĕрринче........................................94
Юрă.......................................................95
Прожектор..............................................95
Хурлатчĕç...............................................96
Кĕрхи кĕвĕ.............................................97
Кайăк хурсем.........................................99
Хамах...................................................100
«Пулман эпир хаяр...»........................101
Пӳртре..................................................102
Шăна....................................................103
«Сарă çулçăсем...»...............................104
Сенкер шел...........................................105
Кăвак куççем........................................106
Ылттăнăм çук... ..................................107
«Ташлама ăстаччĕ эпĕ»........................108

**ЕГОРОВ Иван Павлович**

# Хурал пӗрч.
## Сторожка

Стихотворения
На чувашском языке

Редактор М.П.Сениэль.
Художественный редактор А.А.Трофимов.
Корректор М.П.Егоров
Оригинал-макет Н.Е.Ивановой.

Подписано к печати
Формат 60х90 1/32
Бумага офсетная
Физ. печ. л.
Тираж 300 экз.

Печать офсетная
Гарнитура Times
Учетно-изд.л.
Заказ №